Чăваш республикĕн Сталинла Конституцине йышăнни пĕр çулталăк çитрĕ

Иртнĕ 1937 çулхи ийулĕн 18-мĕшĕнче Чăваш республикĕнчи Советсен Чрезвычайлă XI-мĕш Сйеçĕ Чăваш Автономлă Советлă Социалисăмлă Республикĕн Тĕп Саккувне (Конституцине) çирĕплетрĕ. Унтанпа ĕнтĕ пĕр çулталăк иртрĕ. Вăл Конституцире пирĕн Чăваш халăхĕ социалисăмшăн кĕрешсе илнĕ çитĕнӳсене ылтăн саспаллисемпе çырса хунă.

Чăваш АССР Конституцийĕ пĕтĕмпех ССР Сойузĕн тата РСФСР Сталинла Конституцийĕсемпе килĕшӳлĕ, вĕсемпе таччăн çыхăнса тăрать, урăхла каласан, вăл вĕсен ачи пулса тăрать. Вăл—историлĕ политикăлă пысăк документ. Ăна чăваш ĕçхалăхĕ Ленин—Сталин партийĕ йертсе пынипе,аслă Октябĕр революцийĕ чăваш ĕçхалăхне ирĕке каларнипе, Ленин—Сталин партийĕн наци политикине пурнăçа кĕртсе пынипе, ССР Сойузĕн тăванлă халăхĕн çемйинче пуранин тума пултарчĕ. Вăл пирĕн чăваш халăхĕ пĕтĕм совет çĕршывĕнчи ытти халăхсемпе пĕртан пулса тăнипе, хăйĕн культурине—форми тĕлĕшĕнчен нацилĕ, ăшчикĕпе социалисăмлă культурине хăпартса пынипе, çĕнĕле, социалисăмлă пурнăç тунипе пулчĕ.

Чăваш АССР Конституцийĕ ССР Сойузĕн Сталинла Конституцийĕнче уйăрăлми тачă çыхăнса тăрать. Сталинла Конституци—социалисăмлă государствăн Конституцийĕ. Ун пек Конституци халиччен пулман, пулма та пултарайман.

Капиталисăмлă государствăсенче пирĕнни пек чăн демократилĕ Конституци тума пултараймаççĕ, мĕншĕн тесен, унта ĕçхалăхĕн пурлăх çук, пурлăх уйрăм капиталиссен аллинче. Пирĕн пĕтĕм государствă пурлăхĕ—ĕçхалăхĕн пулса тăрать.

Капиталисăмлă государствăсенче пурлăх, пуянлăх—халăха усă кăтартмали мар, халăхран капиталиссем вальли тупăш кăлармали, халăха пĕр шеллемесĕр ĕçлеттермели пулса тăрать. Пирĕн пурлăх —пĕтĕм ĕççыннишĕн, унăн пурнăçĕпе культурлăхне хăпартмали пулса тăрать.

Пирĕн çĕршывра çын вăйĕпе пурăнмали йĕркене пуçĕпех пĕтерсе, çынна çын експлоатацилессине тĕп тунă. Вĕсен государствă тытăмĕнче експлоататăрсем пуç пулса тăраççĕ. Пирĕн çĕршывра государствă тытăмĕ ĕççыннисен аллинче.

Чăваш халăхĕ аслă Октябĕр революцийĕ пуличчен икĕ хутла пусмăрлăхра асапланса пурăннăскер, халĕ ĕнтĕ Совет Сойузĕнчи пĕтĕм халăхсемпе пĕрле хăйĕн государствин Тĕп Саккунĕ çине: „Чăваш АСС Республикĕ рабочисемпе хресченсен социалисăмлă государстви пулса тăрать", тесе çырса хучĕ.

Малалахи статйи унăн политикăлă никĕсĕ çинчен каласа, унта государствă ирĕкĕ кам аллинче тăнине çырса çирĕплетет. Ун çинчен çапла каланă:

„Чăваш АСС Республикĕн политикăлă никĕсĕ—ĕççынни депутачĕсен совечĕсем, помешчиксемпе капиталиссен влаçне сирпĕтсе антарнипе, пролетари диктатури çĕнтерсе илнипе, чăваш халăхне патша йĕркин тата вырăс империалисăмĕпе буржуазин нацилĕ пусмăрĕнчен хăтарнипе тата националисла контрреволюцийе çĕмĕрсе тăкнипе ӳссе çирĕпленнĕ советсем пулса тăраççĕ. Чăваш АСС Республикĕнче пĕтĕм влаç ĕççынни депутачĕсен совечĕсем урлă хулапа йал ĕççыннисем аллинче тăрать",—тенĕ.

Патша ирĕкне çĕмĕрсе тăкнă хыççăн нацилĕ буржуази „халь ирĕке тухрăмăр, ĕнтĕ пирĕн ирĕк", тесе нумай кăшкăрашнă. Вĕсем: халĕ ĕнтĕ ĕççыннисене експлоатацилеме хамăра ирĕк пулать, тесе шутланă. Çавăнпа наци буржуазийĕ кирек йепле вак халăх хушшинче те февральти революципе усă курса, вакă халăхсен хушшинче буржуалă государствă тума тăрăшнă. Вĕсем, хăйсен тискер шухăшне ĕççыннисенчен пытарас шутпа, „нацилĕ пусмăра пĕтермеле", текен лозунгпа витĕнсе усă курма тăрăшнă.

Нумай çĕрте наци буржуазийĕ хăй йĕри-тавра вăй пухса буржуалă правительствăсем туса ларттарнă. Чăваш наци буржуазийĕ 1917 çулта февраль революци хыççăнах буржуалă националиссем, есерсемпе, кадетсемпе пĕрле, „Аслă Канаш" йатлă буржуалă правительствă туса лартнă. Унта буржуалă националиссем пулнă. Вĕсем пĕрмайах тĕрлĕ сăлтавсемпе хăйсен йĕри-тавра вăй пухнă. Пухусенче Керенскийĕн вăхăтлăх правительствине хута кĕрсе, ăна пит те ырласа решенисем йышăннă.

Сталин йулташ буржуалă-националисла халăх тăшманĕсем çинчен 1918 çултах çапла çырнă:

„Окраинăсенчи правительствăсен кĕрешĕвĕ буржуалă контрреволюци социалисăма хирĕç кĕрешни пулнă та, çав çавах йулать".

Кайран та буржуалă-националиссем социалисăм строительствине хирĕç кĕрешсе пычĕç. Вĕсем пĕрмайах ĕççыннисене хирĕç кĕрешсе пырса, троцкиссемпе, бухаринĕцсемпе—фашисла бандитсемпе пĕрле пĕрлешсе сăтăр туса пычĕç. Вĕсене ĕнтĕ çĕмĕрсе тăкнă.

Сталинла Конституци тăрăх 1937 çулта декабĕрĕн 12-мĕшĕнче ССРС Верховнăй Совечĕн, 1938 çулта ийулĕн 26-мĕшĕнче—РСФСР тата автономлă республикăсен Верховнăй Совечĕсен суйлавĕсем пулса иртрĕç. Чăваш халăхĕ Чăваш АССР Верховнăй Советне сталинла суйлав саккунĕ тăрăх суйларĕ.

Çак суйлавсем совет çĕршывĕнчи халăх çирĕплĕхне, коммуниссен партине, аслă çулпуçне Сталин йулташа пĕтĕм халăх хĕрӳлĕ йуратса тăнине уççăн кăтатрĕç. Суйлавра Чăваш халăхĕ ЧАССР Верховнăй Советне пĕтĕм халăх депутатне — Сталин йулташа тата унăн чи çывăх соротникĕсене — Молăтăв, Калинин, Каганович, Ворошилăв, Андрейĕв, Микойан, Йежов, Ждановăв йулташсене суйларĕ.

Чăваш республикĕн Верховнăй Советне суйланă депутатсем—халăхăн чи лайăх ывăлĕсемпе хĕрĕсем. Вĕсем хушшинче малта пыракан çынсем, производствăри стахановĕцсем, орденоносĕцсем, тырпул маçтăрĕсем, халăх ĕçĕшĕн тăрăшакан, тăшмансемпе хайарран кĕрешекен çынсем.

Сталинла Конституцире граждансен пурин те, арçынсенте, хĕрарăмсенте, ĕçлев прави, кану прави, вĕренӳ прави, пурăнма пулăшу илес права пурри çинчен, вĕсене пурнăçа кĕртмели çинчен çырса хунă. Конституци граждансене вĕсен рассине, национальнăçне пăхмасăр пĕртан правасем парать.

Социалисăмлă тăван çĕршыва сыхласси пур ĕççыннисен чи пĕрремĕш обйазаннăçĕ тата чи таса тивĕçĕ пулса тăрать.

Социалисăмлă çĕршыва тапăнма хатĕрленекенсем вĕсем—ĕççыннисен чи тискер тăшманĕсем пулса тăраççĕ. Вĕсем ĕççыннисен ирĕклĕхне пĕтерсе, капиталиссен пусмăрлăхне тепĕр хут ĕççыннисен ĕнси çине лартма тăрăшаççĕ. Пирĕн вĕсемпе пĕр хĕрхенмесĕр кĕрешесси—пирвайхи задач пулса тăрать. Çавăнпа ĕнтĕ, халăх тăшманĕсене — троцкисла - бухаринла бандитсене, буржуалă националиссене, диверсантсене, шпионсене, сăтăрçăсене, çав пĕр çăмхана пуçтарăннă пĕтĕм ирсĕрсене, етемлĕх йахĕн кайашĕсене тупса тытса пĕтерсе пымала. Политикă тĕлĕшĕнчен тимлĕ пулни, большевикла çивĕч сыхăлăхлă пулни, тăшмансемпе нихçан та килĕшменни, тăшмансемпе вĕçне çитиччене кĕрешсе пыни кирлĕ. Нацилĕ республикă условисенче большевикла сыхăлăх пушех те ытларах кирлĕ Сталин йулташăн çак кăтартуне пĕр самантлăха та манма йурамасть: „çынсен ăстăнĕнчи капиталисăм йулашкисем нацилĕ ыйту йенĕпе ытти кирек хăш йенĕпе пулнинчен нумай ытларах чĕрĕрех. Вĕсем нумай ытларах чĕрĕрех, мĕншĕн тесен, нацилĕ тумпа витĕнсе хӳтĕленме май пур" (Сталин).

Çавăнпа та тăшмансен ирсĕр ĕçĕсем çинчен пĕр самантлăха та манмасăр, çак Конституци çине çырса çирĕплетнĕ правасене чăваш халăхĕ хăй аллинче çирĕп тытса пырса, малашне те тăшмансене пĕр хĕрхенмесĕр, коммунисăм тăвас ĕçре пĕтĕм вăйа хурса хастарлăн кĕрешмеле.

Т. В. Васильйĕв.